Малта пыракан организацисенче

# Проект хăватне алла илеççĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

– Муркашран туяннă кирпĕчпе стройкăра вăхăт сахал çухалать. Çавна пула ĕç хăвăртлăхĕ ӳсет. Ку вара Раççейре çуралакан çĕнĕ программăсене хăвăртрах пурнăçлама пулăшать, – терĕ Чулхуларан килнĕ водитель автомашинине сортланă кирпĕче тиеме тăратнă май.



**Зоя Алексеевна Петрова завсклад (сылтăмри) йĕркелесе пыракан сортировщицăсен бригади кăмакаран тухнă кирпĕчсен черетлĕ партине сортлама пуçларĕ.**

Клиентсем çакнашкал хак пани – тĕллевлĕ пурнăçланă ĕçĕн çимĕçĕ. Ĕççене Зоя Алексеевна Петрова завсклад йĕркелесе пыракан сортировщицăсен бригади вара кăмакаран тухнă кирпĕчсен черетлĕ партине сортлама пуçларĕ. Ăна туянма Чулхуларан килнĕ КамАЗ хыççĕнче Шупашкартан, Йошкар-Оларан, Чикмерен, Хусантан килнĕ автомашинăсем тăраççĕ.

–Пурин ыйтăвĕсене те тивĕçтерейретĕр-и? – кăсăкланатăп склад заведующиĕнчен.



**Ю. Евдокимов тракторист хăйне шаннă ĕçе тăрăшса пурнăçлать.**



**Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан ĕçченсем чĕрĕ кирпĕче кăмакана ăсатаççĕ. Вĕсем (сулахайран сылтăмалла): Любовь Денисова (ĕç стажĕ 20 çул), Петр Спиридонов (9 çул), Георгий Герлов (13 çул), Галина Ипатьева (5 çул).**

– Ăна пурнăçласси – пирĕн тĕп тĕллев. Пурнăçласси кăна мар, ыйтакансен ыйтăвĕсене пахалăхлă та вăхăтра татса парасси. Талăкне 48-50 пин штук кирпĕч кăларатпăр. Унăн 25-27 проценчĕ уйрăмах пысăк пахалăхлă М-150 маркăна ларать. Хакĕ пысăкрах пулнине пăхмасăрах паха продукцие туянакансем нумай. Кунпа пĕрлех пахалăхран пĕртте начар мар М-100 тата М-125 маркăллă кирпĕч те айккинче выртса юлмасть. Пахалăх никĕсĕнче кирпĕч тумалли материал, кăмакаран тухнă кирпĕче суйласа хуни тата технологи дисциплинине пăхăнни, ĕçлекенсем хăйсен ĕçĕшĕн ответлăха туйма пуçлани, – пулчĕ хурав.

Пахалăха тĕпе хунăранах ĕнтĕ завод пĕр сменăра кăларнă продукци тепĕр смена ĕçе пуçăниччен сутăнса та пĕтет. Заводăн юлашки çулсенчи тепĕр çĕнĕлĕхĕ вăл – проект хăватне çитме пăхаççĕ. Призводство хăвачĕ тенĕрен, ăнлантарса çакна каламалла. Завод 1990, 1991, 1992 çулсенче çак хăватпа ĕçленĕ, анчах ун чух кирпĕче сортласа сутасси туллин пурнăçланман. Паян вара Муркашсем сортласа сутнипех проект хăватне алла илни пирĕн производствăна та ĕç культури çитни пирки калать.

– Потребительсем юлашки вăхăтра хак çине мар, пахалăх çине ытларах пăхни сисĕнет. Çавăнпа та М-150 маркăллă кирпĕч ыйтакансем йышланчĕç. Унччен технологие тивĕçлĕ шайра тытманран ку маркăллă кирпĕч завод производствинче пулман. Халĕ кунта çирĕп йĕрке турăмăр та – пăр тапранчĕ. Технологие çĕнетсех пырас çулпа юлашки çулта завод валли сакăр хăватлă çĕнĕ трактор-машина 7 миллион ытла тенкĕлĕх илтĕмĕр, кирпĕч кăлармалли иккĕмĕш кирпĕч производствине юрăхсăр кирпĕчсемсĕр шута илни. Завода йĕркеленĕренпе кунта проект хăвачĕпе продукци тухман пулсан, кăçал завод ĕçченĕсем вак кирпĕч тухнине шутламасăр лини валли çĕнĕ оборудовани пĕр миллион ытла тенкĕлĕх туянтăмăр, производство пӳлĕмĕсемпе территорие тирпей-илем кĕртме 3 миллион тенкĕне яхăн тăкакларăмăр. Производство ӳснипе пĕрлех бюджетсене миллионшар тенкĕ налук тӳлетпĕр. Ку вара халăхăмăрăн социаллă сийне пулăшу пама хăйне евĕр тĕкĕ, – ăнлантарать Юрий Иванович заводăн тĕп бухгалтерĕ Раиса Александровна Антонова илсе килсе панă хутсене пăхса.

Завод аталанăвĕ Владимир Петрович Тукмаков директорпа унăн çумĕ Юрий Иванович Петров ĕçлеме пуçласан малалла пысăк утăм турĕ. Завода 2005 çул вĕçĕнче çĕнĕ команда килнĕ чух кунта çулталăкне 6 миллион та 258 пин штук кирпĕч кăларнă пулнă. Иртнĕ çул вара производство виçи икĕ хута яхăн ӳссе 11 миллионран иртрĕ. Ку вăл вак кирпĕче шутламасăр. Ӳсĕм çулĕ çине тăнă завод вара малтан мала утăмлать. Кăçалхи 7 уйăхра завод ĕçченĕсем производство технологине пăхăнса 8496 пин кирпĕч кăларнă та ĕнтĕ. Уйăхсерен 1400 пин штук кирпĕч кăларнине шутласан, Муркашсен çулталăк вĕçĕнчи ӳсĕмĕ епле пуласси каламасăрах паллă.

Уйрăм сăмах тупăшпа ĕç укçи пирки. Алă усса лармасан, кĕсье пушă пулмасть. Иртнĕ çул завод кирпĕч сутса 63378 пин тенкĕ укçа тунă пулсан, кăçалхи 7 уйăхри çак кăтарту – 63634 пин тенкĕ. Заводра ĕçлекенсен вăтам ĕç куçи те пĕчĕк мар: 14 пин те 500 тенкĕ. Заводри 180 ĕçчен паян икĕ сменăпа талăкĕпех ĕçлет. Уйрăмах тăрăшуллă ĕçлекенсене хавхалантарасси те заводра иккĕмĕш вырăнта мар. Акă Строительсен кунĕ ячĕпе заводра ĕнер ирттернĕ уявра смена мастерĕпе В. Барковпа Р. Зайцева съемщица ЧР Строительство министерствин Хисеп грамотисене, Н. Чамкова сортировщицăпа Р. Тихонов электрогазосварщик тата А. Быков электромонтер «Чувашагропромстрой» грамотисене, чылайăн район администрацийĕн Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсене, завод администрацийĕн Хисеп грамотисене тивĕçрĕç.

Пур налуксене те вăхăтра тӳлесе, çĕнĕлĕхсене тăтăш алла илсе пыракан завод ыранхи куна шанчăклă пăхать.

**А. ПЕТРОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Аталану çулĕпе пыракан коллективра

# Президент программине пурнăçлассишĕн тăрăшатпăр

***Раççей Федерацийĕн мал туртăмлă утăмĕ Чăваш Ене те айккинче хăвармасть. 2002-2010 çулсем валли пăхнă «Çурт-йĕр» тĕллевлĕ федераллă программăпа унăн «Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтересси» подпрограмми, «2010 çулччен ялсене социаллă аталантарасси» программа, ялсем патне асфальт сарнă çулсем çитересси, ЧР Президенчĕн «Çамрăк граждансене патшалăх енчен пулăшассине вăйлатасси çинчен» Указĕ, «АПК аталантарасси» нацпроект тата ытти те ял пурнăçне çывăх вăхăтрах тĕпрен улăштарма пăхнине калаççĕ. Çак ырă тĕллевсемпе мал туртăмлă улăштару ĕçĕсем, тĕпрен илсен, йăлтах хамăртан килнине тата ку ĕçе вырăнти строительство организацийĕсем пысăк тӳпе хывнине шута илсе Строительсен кунĕ умĕн «Моргаушская» МСО» хупă акционерлă обществăн генеральнăй директорĕпе Владислав Николаевич СЕМЕНОВПА тĕл пулса калаçрăмăр, çамрăк ертӳçĕ район аталанăвĕ çине епле пăхнипе интереслентĕмĕр.***



**– Владислав Николаевич, Муркаш районĕшĕн эсир çĕнĕ çын. Çак шайран эсир, сире шанса панă строительство организацийĕ тата район аталанăвĕ çыхăну епле пулса пырать-ха? Аталану çулĕ уксахламасть-и?**

– Калаçăва питĕ ыйвăр ыйтуран пуçларăр. Пĕрремĕшĕ – эпĕ хам çинчен калама юратмастăп, ман çинчен ĕçĕмсем калаччăр. Иккĕмĕшĕ – ĕççене курăмлă тумалăхах Муркаш енре эпĕ ĕçлеймен-ха. Анчах патшалăх хама çак тивĕçе шанчĕ пулсан, стройкăра ку таранччен пухнă опыт «Моргаушская» строительство организацийĕшĕн те ытлашши пулас çук тетĕп. Пирĕн паянхи тĕп тĕллев – президентăн «Çын туянма пултаракан хăтлă çурт-йĕр» программине туллин пурнăçлассипе ĕçлесси. Çапла тăватпăр та. Май килнипе усă курса çак тĕллеве пурнăça кĕртессипе вăй хуракан ĕçтешĕмĕрсене, пирĕнпе çыхăнса ĕçлекенсене, эпир тунă çурт-йĕрпе усă куракансене тата хамăр патăмăрта нумай ĕçленисене, ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнисене Строительсен кунĕпе ăшшăн саламлатăп. Паян пирĕн патăмăрта ĕçлекенсем ялсен инфраструктурине аталантарассинче, вĕсен социаллă пурнăçне лайăхлатассинче малашне татах та тăрăшарах ĕçлессе, пирĕн çурт-йĕре пурăнма куçакансем вара хваттерсен хăтлăхĕ пирки пĕртте пăшăрханмасса шанатăп. Умри тĕллевсем пирĕн пĕрлехисем пулччăр тата вĕсем кĕске вăхăтра пурнăçланччăр. Çакна валли сывлăх та, ĕçлес кăмăл та пулччăр.

**– Килĕшӳллĕ сăмахсем. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх сирĕн коллективра ĕçре малтуртăмлăхпа палăрнă ĕçченсем чылай. Уяв умĕн вĕсене ятран палăртма çук-и?**

– Ĕçлекен çын чăнах та чыссума тивĕç. Ун умĕнче пирĕн пуç таймалла. «Моргаушская» МСО» хупă акционерлă обществăра та çавнашкал хастарсем пĕрре-иккĕ мар. Акă кăçал районта Республика кунне уявланă чух пирĕн патăмăрта чылай çул производствăпа техника пайĕн инженерĕ пулса ĕçлекен Людмила Владимировна Яндушкина Чăваш Республикин Коммуналлă хуçалăх тата çул-йĕр строительствин министерствин Хисеп грамотине, пирĕн организацире пысăк ĕç стажĕ пухнă Петр Алексеевич Аргандеев автокрановщик «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ сторителĕ» ята илчĕç. Строительсен кунĕ ячĕпе ĕçпе чыс-сума тивĕçнисен йышĕ татах ӳсмелле. Пирĕн патăмăрта ĕçленĕ тата паян та ĕçлекен 8 строитель «Нечерноземагропромстройăн хисеплĕ строителĕ», 3-ĕн «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ», пĕр çын «Тава тивĕçлĕ механизатор» ятсене, пĕр штукатур-маляр «За преобразование нечерноземья РСФСР» медале, иккĕн «Хисеп палли», иккĕн «Ĕç мухтавĕн» 3-мĕш степеньлĕ орденĕсене, 21 строитель тава тивĕçлĕ ĕçпе Раççей шайĕнчи тата Республикăри влаç органĕсен Хисеп грамотисене тивĕçрĕç. Вĕсен ырă тĕслĕхĕ паянхи ĕçченсен тăрăшулăхĕ тата хваттер илекен çынсен пурнăç шайĕ çĕнĕ ӳсĕме çĕкленни пурсăмăра та строительство ĕçĕнче çĕнĕлĕхсене алла илсе ĕçлеме ыйтать. Эпир çапла тăватпăр та.

**– Конкретлăрах каласан...**

– Пытармалли нимĕн те çук. Пирĕн организаци тăвакан хваттерсем Чăваш Республикипе те чи йӳннисен шутĕнче: пĕр тăваткал метр 22000 тенкĕ. Тӳлевре тĕрлĕ мелсемпе усă курма пулать. Анчах çакă вăл пахалăх пĕчĕккине пĕлтермест. Эпир строительство нормисене пăхăнса кирпĕч çуртсем çеç çĕклетпĕр. Пурнăç ыйтăвĕсене шута илсе тата ыррине мала тăратса хваттерсене хăйсене тĕллĕн хутса ăшăтмалла тăватпăр. Çакна валли хваттерсене Италинче кăларнă «Бакси» газ кăмакисем, чугун вырăнне алюмини радиаторсем вырнаçтаратпăр. Хваттерсенче çынсене кăмăллă та хăтлă пултăр тесе хваттерсен тĕрлĕ калăпăшĕсемпе ĕçлетпĕр. Тĕслĕхрен хулара пĕр пӳлĕмлĕ хваттер 36-38 тăваткал метр пулсан эпир çак виçене 41,5-не çитеретпĕр. Хваттерсен хăтлăхне малти вырăна кăларатпăр. Халĕ каланисене шута илсе тата пурнăça кĕртсе паян пирĕн строительсем Москакассинче 36 хваттерлĕ çурта туса пĕтерессипе юлашки ĕççене пурнăçлаççĕ.



**Сăн ӳкерчĕкре: Москакассинчи 36 хваттерлĕ кирпĕч çурта тăвасси вĕçленсе пырать.**

**– Сирĕн калаçуран эсир çĕннине алла илессишĕн тăрăшни курăнать. Çавна май умри плансемпе паллаштараймăр-ши?**

– Ку, паллах, организаци вăрттăнлăхĕ пулсан та уяв умĕн хамăр патăмăрта ĕçлекенсене тата пирĕн пулăшупа усă куракансене хамăр тĕллевсемпе паллаштарни те йăнăшах пулмасть пулĕ тетĕп. «Моргаушская» МСО» хупă акционерлă общество пурăнать, малалла пăхса ĕçлет, хăйĕнпе ĕçлекенсене шанчăк çеç кӳрет. Çакна валли пирĕн туслă команда йĕркеленсе çитнĕ ĕнтĕ. Унăн ĕç кăтартăвĕсем те хам ĕçлеме пуçланăранпа (çулталăк хушшинче) палăрмаллах ӳсрĕç. Пĕлтĕрхи Строительсен кунне пирĕн ĕçченсем строительствăпа монтаж ĕçĕсене 14564 пин тенкĕлĕх пурнăçланă пулсан, кăçал – 15344 пин тенкĕлĕх. Строительство материалĕсене çулталăк каялла 408 пин тенкĕлĕх, хамăр туса кăларнă продукцие 314 пин тенкĕлĕх сутнă пулсан, кăçал – 1914 тата 588 пин тенкĕлĕх. Строительство машинисемпе услугăсем парасси те çулталăк хушшинче палăрмаллах малалла кайрĕ. Çапла вара ĕçлекен халăх йышĕ те кăçал курăмлах ӳсрĕ, 100 çынран иртрĕ. Пĕрлехи тăрăшулăхпа вăтам ĕç укçине 7 пин тенкĕрен ирттертĕмĕр, предприятин иртнĕ çулхи парăмĕсемпе татăлтăмăр. Çĕнĕ вăй-хăватпа ĕç калăпăшĕ пĕлтĕрхинчен 15 процент ӳсрĕ.

Çĕнĕлĕхсем тенĕрен, электриксем килнипе хамăр патăмăрта электролаборатори уçрăмăр. Çакă та район çыннисемшĕнех. Ахальлĕн районта электроэнергипе усă курнă чухнехи çитменлĕхсене пула час-часах пушарсем тухаççĕ. Инкекĕн çак çулне пӳлесси пулать те ĕнтĕ çĕнĕрен уçăлнă лабораторин тĕллевĕ. Унăн пулăшăвĕпе эпир халăха паракан хваттерсене электричествăпа пушар тухаслăхран тĕплĕ тĕрĕслесе паратпăр. Çавăн пекех çынсем паян усă куракан пурăнмалли тата вĕсен производство çурчĕсенчи электрохуçалăха та тĕрĕслеме эпир хирĕç мар. Мĕн пуррине упрама çĕнĕрен тунинчен палăрмаллах çăмăл. Çынсем çакна ăнланаççĕ-тĕк, халăх пирĕн пата килет-тĕк – ĕç пулать, ĕç пулать-тĕк – предприяти аталанать. Ку вара район бюджетне налуксем тӳлессине те ӳстерет. Çакă пĕрлехи пурнăç çĕнĕ шая çĕкленессин никĕсĕ. Куратăр пулĕ, ырă ĕç çумне ырри хушăнсан паха пурнăç ума тухса пырать. Апла пулсан пирĕн хамăрăн та аталану çулĕнчен юлмалли çук.

Района ытларах пулăшас тесе хамăр предприяти базинче çывăх вăхăтрах стройматериалсем тăвас ĕçе йĕркелесе яма пăхатпăр, строительство таварĕсен тата автомашинăсен запас пайĕсемпе сутă тăвассине пуçăнма плансем пур, халăха транспорт пулăшăвĕ парассине анлăлатасси те тĕллевре. Спортпа туслисем валли иртнĕ çулах спорт залне капиталлă юсаса хута ятăмăр. Халĕ пирĕн спортсменсем район шайĕнчи ăмăртусенче палăрнишĕн савăнатпăр çеç. Плансем тенĕрен, кăçал хамăр патăмăрта çĕвĕ цехĕ ĕçлеме пуçларĕ. Ку вара хушма ĕç вырăнĕсем уçса пачĕ. Ĕçлекенĕн тĕллев пулмаллах – пур тĕллевсене каласа та пĕтерейрес çук.

Сире Строительсен кунĕ умĕн калаçăва чĕннĕшĕн пысăк тав. Хăвăра та уяв ячĕпе!

**Анатолий БЕЛОВ калаçнă.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**